# Чунтан калаçнă самантсем

## (Аса илӳ)

**Р.Н. ПЕТРОВА-АХТИМИРОВА**, *педагогика наукисен кандидачĕ*

«Эпĕ хура кĕркунне хура пӳртре çуралнă, çавăнпа хура пулнă», – тесе калама юрататчĕ чăваш халăх поэчĕ Я. Ухсай. Сăвăçăн пархатарлă ĕçне тивĕçлипе хакласа халăх поэчĕн ятне панă. Вăл А.М. Горький тата К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен литература премийĕсене илме тивĕçлĕ пулнă, темиçе орден кавалерĕ.

1986 çулхи июлĕн 10-мĕшĕ – юратнă поэтăмăра юлашки çула ăсатнă кун.

Пушкăрт çĕр-шывĕнчи Слакпуç ялĕ – поэт çуралса ӳснĕ ял. Кĕслету. Ку вырăна Ухсай Яккăвĕ яланах асра тытнă. Хăй виличчен хушса хăварнине асра тытса ăна шăпах çав ту тăррине пытарнă.

«Юратрăм эп, хирсем, сире» сăввинче поэт çапла каланă:

Нихçан та эп хăватăра
Манмастăп, хамăн юррăмра
Ура тапса, пуçа ухса
Сире мухтатăп эп, Ухсай.
*1929*

Вун саккăрти сăвăç çырнă çак йĕркесене. Пурнăç çулĕ çăмăл пулман унăн. Мĕн пĕчĕкрен вĕренме ĕмĕтленнĕ. Ĕпхӳ хулинче, унтан М.В. Ломоносов ячĕллĕ Мускав университетĕнче пĕлӳ пухнă. Тутар халăхĕн паттăр ывăлĕпе, Муса Джалильпе, пĕрле вĕреннĕ.

Хаяр вăрçă çулĕсенче Atăлтан пуçласа Влтава шывĕ патне утса çитнĕ. Атă кунчинчи тетрадьре вăрçă хирĕнче çырнă сăвăсем упраннă.

Эпир вара, вăрçă ачисем, Я. Ухсай çырнисене вуласа ӳсрĕмĕр. «Тутимĕр», «Халăхăн ылтăн кĕнеки», «Кĕлпук мучи» тата нумай-нумай хайлавĕсене вуланă, чылайăшне пăхмасăр калама вĕреннĕ.

1959–1964 çулсенче И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕрентĕмĕр. Час-часах чăвашсен паллă çыравçисемпе тĕл пулаттăмăр. Калаçнă, анчах ушкăнпа тĕл пулни пĕччен калаçнă пек мар.

Мана Я. Ухсайпа сакăр вуннăмĕш çулсенче куçа-куçăн калаçма май килчĕ. Уншăн эпĕ шутсăр савăнатăп. Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче пулса иртрĕ ку. Эпĕ ун чухне Мускавра аспирантурăра вĕренсе диссертаци хӳтĕленĕ хыççăн тăван институтра студентсене вĕрентеттĕм. Çав хушăрах Чăваш кĕнеке издательствинче кĕнеке кăларма хатĕрленеттĕм. Редакторĕ Андрей Алексеевич Алексеев. Вăл ĕçе ирех пыратчĕ, манăн та ĕçе васкамаллаччĕ. Издательство Ленин проспектĕнче «Чувашия» хăна çурчĕпе юнашарччĕ. Редакцирен тухаттăм та Ухсай Яккăвĕпе тĕл пулаттăм. «Ан васка-ха, хĕрĕм, ларса калаçар», – тетчĕ вăл. Çывăхри скверти сак çине лараттăмăр (халĕ унта Çеçпĕл Мишшин палăкĕ пур). Калаçаттăмăр. Эпĕ, паллах, ун сăввисене, поэмисене асăнаттăм. Уйрăмах «Чăваш мунчи» пирки калаçни асра: «Мана критиксем ятлаççĕ. Чăваш мунчи çинчен нумай çыратăн теççĕ. Хăйсем мунча кĕрсе курнă-ши?» Пуçлатчĕ вара мунча сиплĕхĕ çинчен калама. «Тăван килтен эпĕ вун тăватă çултах тухса кайрăм, вĕрентĕм, ĕçлерĕм, аттепе сайрарах пĕрре тенĕ пек кăна курнăçкаларăм. Атте мана мунчара сăвăласа çапатчĕ:

– Кашта таран ӳс эс, пепкеçĕм,
Ӳтне вăй пух, пуçна ăс пух!
Телей те, ырлăх та килеççĕ
Çĕрпе ĕçе юратнă чух.
Тăпра хура, анчах кулачĕ
Ӳсет шап-шурă, çавăнпа
Çĕре юрат! – тесе шăлатчĕ
Мана вăл шурă курăкпа.
Атте мунча кĕртме ăстаччĕ, –
Эс çумлă тырă ан та ак! –
Тесе вăл çапнă чух калатчĕ».

Çак йĕркесене калатчĕ те шăпланатчĕ. Аса илетчĕ пулĕ хăй ачалăхне. Вăл шăпланнă хушăра эпĕ «Чăваш мунчи» хайлавăн эпиграфне пăхмасăр калаттăм, хамăр тăрăхри мунча такмакĕсене аса илтереттĕм.

«Эсĕ вара «Чăваш мунчине» те вуланă-и? – тесе тĕлĕнетчĕ. Чи усăлли çăка мунча та... Унтан Василий Шукшин мунча кĕме юратнине калатчĕ. Сростки ялĕнче хăйсем пурăнакан пӳрт кил картинчи мунчана В. Шукшин хăй аллипе тунă. Унăн пĕр калавне Хветĕр Агивер «Мунча ăшши» ятпа куçарса кăларчĕ вĕт.

«Эх, ялти мунча», – тесе хуратчĕ шăппăнрах сасăпа. Лăпкăн калаçатчĕ вăл.

Чăнах вара мунча мухтавĕ
Кĕрлерĕ ман çырнисенче,
Тепре çырма пур ман сăлтавăм,
Чи тивĕçли вăл хальхинче.

Çак йĕркесене калатчĕ те ура çине тăратчĕ: «Каяс, çырас... Ыран та килетĕн пулĕ, хĕрĕм. Калаçăпăр...»

Çуллахи ăшă кунсемччĕ. Тепĕр кунне каллех тĕл пултăмăр. Вăл чей ĕçсе тухатчĕ ресторантан. Шелепи патĕнче те, Ĕпхӳре Мажит Гафури килĕнче те чей ĕçни асрах ĕнтĕ унăн. «М. Гафурин самоварĕ хăй пекех ватă» тесе каланисем ман асрах-ха. Майĕпен утатчĕ вăл Ленин проспекчĕпе. Инçех пурăнмастчĕ те. Хальхинче ман сăмахăм «Йыттăм тирĕнчен çĕленĕ çĕлĕк» (1928–1930) хайлав пирки. Эпĕ çак йĕркесене вулатăп:

Тин анчах тĕнче курма
Куçне уçнă анчăкран
Хам ӳстернĕ йыттăма
Эпĕ ямăп асăмран.
Ун çамки çавра хушка,
Кăкăр умĕ те шап-шур
Пулнăран ăна Шуркка
Терĕм тĕрĕс те маттур.

Вулатăп та вулатăп, калатăп та калатăп çак йĕркесене. Якку пиччен куçĕнчен куççуль тухрĕ: «Эсĕ çакна та вуланă-и?» Çапла калама юрататчĕ вăл. «Пулнă çав ман юратнă йыттăм. Хураха çеç вĕрекен тӳрĕ шухăшлă йытта ялти вăрă вĕлернĕ. Пирĕн тата çĕрле сурăх вăрлама пынăччĕ. Шуркка ун çине тапăннă, сывăракан ял çыннисене вăратнă. Сурăх вăрри тытăннă. Манса кайман çавна вăрă. Хăйне вăрăпа тытнăшăн ăна вĕлернĕ.

Куртăм эпĕ пуринчен
Çӳллĕ, вăрăм чĕр вăрра.
Çĕнĕ çĕлĕк пуçĕнче
Хӯхĕм, йĕпкĕн хуп-хура.

Пулнă çав ялсенче çавăн пек вăрăсем.

Хамăн савнă тус çукки
Витĕр витрĕ чĕреме».

Манайман хăйĕн тусне вăрçă витĕр утса тухнă салтак.

Тепрехинче пирĕн калаçу «Шăллăм» поэма пирки пулчĕ. Ăна вăл вăрçă хирĕнче Кременец хули çывăхĕнче 1944 çулта çырнă. Çак поэма ман чĕре варринчехчĕ. Эпĕ лайăхрах пĕлес шутпа поэма пирки сăмах пуçларăм. «Пулнах-и санăн Кирле шăллу? Нумай хайлавсенче калани пур ун çинчен, – терĕм. – Акă «Чăваш чуннех» илер:

Санăн икĕ йĕркӳне
Итлеме, ĕçчен пулма
Эп каларăм Кирлене,
Çичĕ çулхи шăллăма.

«Пуканесен бригадинче» те ун çинчен калани пур».

Хаяр вăрçă çулĕсенче «Шăллăм» поэма çырăнать. Ассăн сывла-сывла калатчĕ вăл вăрçă хирĕнче, çирĕмрен те иртмен Кирле шăллĕ çинчен. «Шăллăм вилни çинчен калакан хыпара илтсен эп ача пек макăртăм... Паттăррăн вилсе пуç хунă эсĕ Ельня хулинче... Текех çук шăллăм, текех тĕл пулса калаçас çук. Пысăк çухату», – тетчĕ Ухсай Яккăвĕ шăллĕне аса илнĕ май.

Çапла пĕр вăхăт ирсерен калаçрăмăр эпир чăваш халăх поэчĕпе.

Мана поэтăмăр халăх сăмахлăхне, халăх йăли-йĕркине тĕплĕн пĕлни тĕлĕнтеретчĕ.

Тырă-пулă çитĕнтермелле, вăрмана упрамалла. Çамрăк чухнех çырнă «Карлав аври касмашкăн кайрăм» (1934) сăввинче вăрманта ӳсекен йывăççене шеллемелле тенĕ. Удмурт поэчĕ Флор Васильев сăмахĕсемпе каласан – «В чащобе нет лишних деревьев». Çапла шухăшлать чăваш халăх поэчĕ те.

Илер-ха унăн «Шурă хурăнпа калаçни» лирикăлла поэмине. Шурă хурăнпа калаçнă май вăл пĕтĕм халăхпа калаçать.

Авалхи йăлапа ачалăх сукмакĕпе чупса пĕччен ларакан ватă хурăна сывлăх сунать, йывăçран ун пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлет.

Лараттăмăр çапла чунтан калаçса. Унран вĕренмелли нумайччĕ. Тăван халăха юратни тĕп вырăнтаччĕ. «Çĕр-шывăн хăш кĕтесĕ хитререх?» – тесе ыйтсан. «Çуралнă çĕр-шыв, Кĕслету», – тетчĕ. «Атăл вара?» – ыйтаттăм.

«Юррăмăр, янра, ан татăл,
Атăл тăрăх кĕрлесем!
Пысăк эсĕ, савнă Атăл,
Чаплă санăн çыннусем.

Çапах та çуралнă çĕр-шывран хакли нимĕн те çук. Çуралнă çĕр-шыв... Хăй патнех туртать, чĕнет».

Вуланă, пăхмасăр та калама вĕреннĕ поэтăмăр çырнисене. Анчах хăйпе курса калаçнисем... Ахахăнмерченĕн янăраççĕ вăл каланисем. Халĕ те хăлхарах. «Ĕçлени нихçан та мăшкăл мар, ӳркенни çеç – мăшкăл», – тетчĕ вăл Геспод сăмахĕсемпе.

Поэтăмăр ялан халăх чĕринче пурăнать.